# АНТАНАС ВЕНЦЛОВА

*Литва*

## ПӖРЛӖХ

Чӗрӳ хавассӑн тапнине
Паха юррунтанах эп сисрӗм.
Вӑл, тус тесе, мана чӗнет,
Унра йыхрав сасси эп илтрӗм.
Шевченко, халӑхшӑн ҫунса,
Ун ирӗк шухӑшне вӑратнӑ...
Пур ҫӗршывпа пӗрле тӑрса,
Хӗвел патне эс халь хӑпарнӑ.
Тӑван Ҫӗршывшӑн вӑрҫӑра
Эпир пӗрле вӑрҫса мир илнӗ.
Асран каймарӗ Сталинград,
Асран каймарӗ Киев, Вильнюс.
Каллех куратӑп Днепра,
Полтава ҫеҫкисем шап-шурӑ,
Йӑрансӑр хир, сӑртсем курап,
Куратӑп тутлӑ шӑршлӑ курӑк.
Куратӑп сан хулусене,
Вӗсем ҫамрӑклансах пыраҫҫӗ.
Курап Донбасс шахтисене,
Днепрогэсна курап ҫак кас эп.
Салам сана литвинсенчен,

Тăван Украйна, ырă кур эс!
Юрлатпăр пурте сан çинчен
Нумай чĕлхепеле пĕр юрă.
Расна чĕлхеллĕ, пĕртăван
Гражданинсен Совет çĕршывĕ,
Çак пирĕн пĕрлĕх упрансан,
Сыхланĕ ĕмĕр çирĕп, сывă.
... Чĕрӳ хавассăн тапнине
Паха юррунтанах эп сисрĕм.
Вăл тус чĕри пекех чĕнет,
Унра йыхрав сасси эп илтрĕм.

1954